Суйлавччен умри тĕллевсене сӳтсе яватпăр

Паянхи ыйтусене ырана хăварас марччĕ

«Çиччĕ виç те пĕрре кас», – тенĕ асатте-асаннесем пирĕнтен кашнинех ачалăхра ăс парса. Çак шухăш-хушу паянхи чăвашăн кашни утăмĕнче палăрать. Ăна пурнăçласа хуласем ӳсеççĕ, ялсем çĕнелеççĕ, чăваш ачи сутта тухса пырать, хăйĕн пурнăçне ыттисемшĕн тĕслĕхе кăларать. Çак çул çинче хăйĕн социаллă-экономика аталанăвĕпе тата халăх йышлă пурăнассипе районта ырăпа палăракан Кашмаш ялĕ те айкинче тăмасть. Кашниех ăнланатпăр, пирĕн ачасемпе мăнуксен малашлăхĕ, ялăмăр пуласлăхĕ эпир паян хамăр умра тăракан çивĕч ыйтусене епле татса панипе, ыранхи куна пăхса мĕнле утăмсем тунипе тӳрремĕнех çыхăннă. Юлашки 20 çулта ялта виçĕ çĕнĕ урам çĕкленни ял ачисем ялтан кайманнине, ялта пурăнакансен сахалланманнине çирĕплетет кăна. Ялта çĕнĕ çемьесем йышланни демографи ларутăрăвне те тивĕçлĕ шайра тытса пыма пулăшать.

Йăлтах йĕркеллĕ, çанталăкĕ илемлĕ, вырăнĕ меллĕ темелле, анчах паян Кашмашсене хумхантаракан тĕп ыйту – ÇĔНĔ ШКУЛ! 1896 çулта уçăлнă шкултан тĕрлĕ çулсенче ЧР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ А. Токарев, ЧР тава тивĕçлĕ артистки Д. Столярова, филологи наукисен докторĕ А. Львов профессор, Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ А. Быков, Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ В. Яриков, Раççейĕн малтанхи Геройĕсенчен пĕрин Н. Смирнован амăшĕ Т. Смирнова, вуншар офицер, çĕршер учитель, агроном, зоотехник, темиçе журналист вĕренсе тухнă. Тăван Çĕр-шывăн Аслă вăрçинче СССР Геройĕ пулнă Б. Васильев 1929–1931 çулсенче çак шкул заведующийĕнче ĕçленĕ, хальхи шкулăн тĕп çуртне çĕкленĕ. Алжировсен, Ефремовсен, Толикинсен, Чиновниковсен, Степановсен, Ивановсен ĕç династийĕсем те Кашмаш шкулĕнчен пурнăç çулĕ çине тухнă. Çаксем йăлтах шкул историйĕнче ылтăнпа çыранса юлнă çулсем. Шкул мĕн тунипе кăна çырлахса лармасть, çĕнĕлĕхсене шав алла илсе пырать, ыранхи куна пăхса мал туртăмпа пурăнать.

Паян Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта ачасене тулли пĕлӳ парас тĕллевпе виçĕ тĕп енпе ĕçлесе пыратпăр: экологи, сывлăха çирĕплетесси, ĕçе вĕрентесси-хăнăхтарасси. Хамăр тĕллевре эпир ачана пĕлӳ панипе пĕрлех унран чăн-чăн çын ӳстерсе çĕршыва юрăхлă хатĕрлессине куратпăр.

Экологи. «Эрози вăйне чарар!» девизпа 1970 çулта А. Перлов пуçарăвĕпе шкулта «Зарянка» шкул лесничестви никĕсленчĕ. 38 çул хушшинче ачасен вăйĕпе лартнă вăрман 5,5 гектартан 20 гектара çитрĕ. Вĕсенчен 5 гектарне юлашки виçĕ çулта лартрăмăр. Çак ĕçре «Свобода» хуçалăхра вăй хуракан Н. Архипов пулăшăвĕ витĕмлĕ пулчĕ. Паян вăл вырăнсем Кашмаш ялĕшĕн чи илемлĕ тĕлсем. Шкул ачисен вăрманçă команди районта яланах малтисен ретĕнче. 2005 çулта шкул «Хамăр вăрмана чĕртер» проекта хутшăнса Диплом çĕнсе илчĕ, çав çулхинех шкулăн хушма участокĕнче йывăç калчисем ӳстерекен питомник никĕсленчĕ. Çак питомникрен иртнĕ кĕркунне кăна виçĕ çулхи 1300 тĕп хырпа чăрăш калчине куçарса лартрăмăр.

Сывлăха çирĕплетесси: Сывă ăру та шкул çулĕсенчех никĕсленет. Çакна эпир курса-пĕлсех тăратпăр. Çавăнпа та ачасем хушшинче физкультурăпа спорта аталантарассине хамăр шкулта ялан мала тăрататпăр. Пĕрлехи тăрăшулăх вара район шайĕнче ирттерекен спорт ăмăртăвĕсен кăтартăвĕсем урлă аван курăнать. Çак вĕренӳ çулĕнчи паянчченхи спорт ăмăртăвĕсем мĕн çинчен калаççĕ-ха? Пĕлтĕрхи октябрĕн 3-мĕшĕнче шкулти çăмăл атлетсем çуллахи спорт сезонне хупса «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат призĕшĕн ирттернĕ эстафетăра районта 3-мĕш вырăн йышăнчĕç. Декабрĕн 14-мĕшĕнче районти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсем хушшинче сĕтел çи теннисла выляссине, декабрĕн 22-мĕшĕнче хĕллехи спорт сезонне уçса йĕлтĕрпе чупса ăмăртассипе, кăçалхи январьте шахматла выляссипе 3-мĕш вырăнсене тивĕçрĕмĕр. Январьтех шашкăлла выляссипе, хĕллехи полиатлонпа пĕрремĕш вырăнсене çĕнсе илтĕмĕр, февральте пневматикăлла винтовкăран перессипе район шайĕнче çĕнтерӳçĕ пулса тăтăмăр тата Е. Андреев яччĕпе хисепленекен призшăн йĕлтĕрпе ăмăртса тĕп шкулсем хушшинче 2-мĕш вырăна тухрăмăр. Çамрăк армеецсен отрячĕсем хушшинчи хĕллехи спартакиадăра та пирĕн ачасем пит хĕрсе мерĕç. Çак çитĕнӳсене тунă çĕрте шкулти физкультура учителĕн Л.А. Яриковăн тӳпи те пысăк.

Ĕçе вĕрентесси. «Чăваш ачин хăрах ури сăпкара, хăрах ури акара», - тенĕ асаттесасаннесем авалах. Мĕн пĕчĕкрен вăл çĕр ĕçне вĕренсе-хăнăхса, ашшĕ-амăшне пулăшса çитĕннĕрен каланă та çапла. Шкулта вĕренекен унти сăнав лаптăкĕнче хăйĕн пĕлĕвне тишкерсе хаклама хăнăхать, ĕç урокĕсенче ăсталăхне ӳстерет. Шанать çитĕнекен ăрăва ял-йыш, унра ял малашлăхне курать. Ара, 21 ĕмĕрти çĕнĕ ял шăпи паян ача шкулта епле вĕреннинчен, тивĕçлĕ воспитани илсе чăн-чăн çын пулма хатĕрленнинчен нумай килетçке.

Ял шкулĕн тĕп функцийĕсенчен пĕри вăл – ялти спецификăлла производство вăйĕсене хатĕрлесси, çĕнĕ условисенчи производство хутшăнăвĕсене йĕркелесси. Паян çынсен шухăшлавĕнче çирĕпленнине хирĕçлесех, пытармăпăр, ял хуçалăх производстви пысăк рентабеллĕхлĕ пулайрать. Кунта ял хуçалăхĕнче вăй илекен çĕнĕ технологисем пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çĕнни вăй илни çамрăксене хăйсем çуралнă вырăнсенех никĕслемме пулăшĕ. Ял шкулĕн тĕп тĕллевĕ – ачасене математикăпа историе вĕрентесси çеç мар, ял пурнăçне хăнăхтарасси те, çĕр ĕçченĕн ĕçне хисеплеме вĕрентесси те. Ахальтен мар район ертӳçи Ю. А. Иванов ачасене ĕçе вĕрентессине воспитани ĕçĕнче малти вырăна хурать. Ачасене кулленхи ĕçе хăнăхтармасăр вĕсенчен ĕçчен çын çитĕнтерме çук. Ялти шкулăн ачана тăван çĕре, тавралăха юратма вĕрентмелле. Çакна эпир ăнланатпăр, хамăрăн тĕп тĕллев тесе ĕçлетпĕр. Акă кăçал кăна эпир хамăр шкул ачисемпе пĕтĕмпе 104 пин тенкĕ укçа ĕçлесе илтĕмĕр. Вăл шутран 25 пин те 36 тенкине «Восток» хуçалăхра, 50 пин тенкĕне яхăн тăван «Свобода» хуçалăхра, 28 пин те 783 тенкине хамăр шкул çумĕнчи хушма хуçалăхран илтĕмĕр. Çакă мар-и-ха шкул ачисене ĕçе хăнăхтарса пыни, ачасене укçа шутне вĕрентни, ачасене ял хуçалăх ĕçне хăнăхтарни? Хирĕçле хурав çук.

ЧР Президентĕ Н. Федоров пуçарнă «Республикăри ялсен 2010 çулченхи социаллă аталанăвĕ» тĕллевлĕ программăна республика тата район ертӳçисем пĕр пулса пурнăçа кĕртесси, çĕр ĕç хисепне çĕнĕ шая çĕклесси – пирĕн паянхи тĕп ĕç.

Патшалăх Думи кăçалхи вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕнче ирттернĕ обществăлла итлевсенче ял шкулĕн ыйтăвне тĕплĕ пăхса тухрĕ. Унăн ĕçне учительсемпе ученăйсем, обществăлла ĕçченсем, политиксем йышлăн хутшăнчĕç. Пĕрлехи ĕçе пĕтĕмлетсе халĕ çапла калама пулать: «Ял шкулĕн ял ĕçченне воспитани парса ӳстермелле». Ял шкулĕ ялти социаллă пурнăçпа вырăнти ăсталăхăн ĕçпе интеллектуал потенциал йĕркелĕвĕн никĕсĕ пулса тăрать.

Юлашки çулсенче вăй илнĕ «АПКна аталантарасси» приоритетлă наци проекчĕпе килĕшӳллĕн çитес 5 çул хушшинче ял хуçалăх валли патшалăх енчен пĕр триллион та 100 миллиард тенкĕ уйăрма палăртнă. Çак укçа ял хуçалăх таварĕсемпе промышленность продукцийĕ хушшинчи танмарлăха саплаштарма та каймалла тесе палăртрĕ РФ Ял хуçалăх министрĕ А. Гордеев.

Ял ыйтăвĕ нумаях пулмасть Барнаулта иртнĕ ял Пухăвĕнче те тĕп вырăнта пулчĕ. Унта Раççей правительствин пĕрремĕш вице-премьерĕ Д. Медведев хутшăнни те Пуху пĕлтерĕшне ӳстерчĕ кăна. «Хальхи ялти демографи лару-тăрăвĕ – аграри политикин тĕп саманчĕ. Яла унăн çирĕп хуçине тавăрмасăр унта нумай миллиардлă укçа-тенкĕ хума çук, - терĕ хăйĕн сăмахĕнче Дмитрий Анатольевич. – Ялсенче паян çĕр-шыври халăхăн виççĕмĕш пайĕ пурăнать. Вĕсем валли пурнăçламалли пирĕн чылай. Шкулсене Интернет çитерни лайăх-ха, анчах çĕнĕ шкулсем тăвассине те пирĕн активлăрах ĕçлемелле». Дмитрий Анатольевич Медведев юлашки çулсенче наци проекчĕсемпе ăнăçлă ĕçленипе палăрса тăрать. Çавăнпа та вăл çĕнĕ шкулсен пирки калани те пĕлтерĕшлĕ тесе шутлатăп. Вăл Раççейри тĕрлĕ регионсен пурнăçне аван курса-пĕлсе тăрать, влаç структурисенче 15 çул хушши Тăван çĕр-шыв ырлăхĕшĕн вăй хурать. Çĕршыври лару-тăрăва аван пĕлсе тăнипе, хальхи Президентăн В.В. Путинăн курсĕпе килĕшӳллĕн, малалла ĕçлесе пырасса шанса тăратпăр. Ку курс вăл – Раççей халăхĕн пурнăç шайне, çĕр-шыв хăватне ӳстермелли çул-йĕр. Çакă вăл ырă ĕçсен çулталăкĕнче ырă йăласене çирĕп тытса пыма пулăшакан, малашлăха чĕнекен йыхрав.

Куратпăр ĕнтĕ, ял пурнăçĕ тĕллевлĕ аталану умĕнче тăрать. Çак аталану тата пурнăç ыйтакан çĕнĕлĕхсем çĕнĕ шкул ыйтăвне малти вырăна кăлараççĕ. Ку вара паян Кашмашсемшĕн тĕп ыйтусенчен пĕри. Президент суйлавĕпе пирĕн яла та çĕнĕ шкул çитессе шанатпăр, хамăр ентешсене çитес вырсарни кун тĕрĕс суйлав тума чĕнетпĕр.

Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ ячĕпе шкул директорĕ Г.П. ЕРШОВА.

Вулавçăсене суйлава хатĕрленнĕ май

Суйлава паспортпах каймалла

Çитес вырсарни кун, мартăн 2-мĕшĕнче, Раççей Федерацийĕн Президентне суйламалли кун. Суйлава пурин те паспортпа каймалла. Çавăнпа та суйлав кунĕ çывхарнă май калаçăва Раççейри федераллă миграци службин Чăваш Республикипе ĕçлекен управленийĕн Муркаш районĕнчи территори пункчĕн ертӳçине З. СОРОКИНАНА чĕнтĕмĕр.

– Президент суйлавĕ – питĕ ответлă тапхăр. Çавăнпа та çак ĕçрен никамăн та пăрăнса юлас марччĕ. Анчах суйлава хутшăнма та хăйĕн йĕрки пур: суйлава РФ граждансен паспортпа каймалла. Çавăнпа çакăнти хăш-пĕр улшăнусемпе çĕнĕлĕхсем çинче чарăнса тăрам-ха паян.

Граждансене вăхăтлăх пулнă тата ялан пурăннă çĕре учета тăрасси тата çав çĕртен учетран кăларасси тӳлевсĕр пулса иртет.

Хăйĕн пурăнмалли вырăнне улăштарнă гражданинăн çĕнĕ çĕрте 7 талăкра регистрацишĕн ответлă çынсем патне заявленипе тухмалла.

Гражданин вăхăтлăх пурăнма суйласа илнĕ çурт-йĕр унăн ялан пурăнмалли вырăнĕ шутланмасть, саккунпа пăхнă 90 кун иртсен унăн регистраци органĕсем патне е, вĕсем пулмасан, çурт-йĕр хуçи патне çырупа тухмалла.

Гражданин вăл е ку тĕлте вăхăтлăх пулнине регистрацилеме çыннăн паспорчĕ, вăхăтлăх пулнине регистрацилеме ыйтса çырнă заявлени, палăртнă адреспа вăхăтлăх пурăнма ирĕк паракан документ (пурăнмалли çурт е пӳлĕм пирки килĕшӳ туни), гражданина вăхăтлăх пурăнма пӳлĕм е çурт паракан заявленийĕ.

Тăтăш пурăнмалли вырăнта регистрациленме вара гражданинăн паспорчĕ, регистрацилеме ыйтса çырнă заявлени, палăртнă адреспа тăтăш пурăнма ирĕк паракан документ, гражданина пурăнма пӳлĕм е çурт паракан заявленийĕ пулмалла.

Регистраци учетĕнчен тухнă граждансен çĕнĕ пурăнмалли вырăна çитсе учета тăриччен унчен пурăннă вырăнта панă учетран тухнине çирĕплетекен адрес хучĕ пулмалла. Вăл çук е гражданин ăна çухатнă пулсан, унăн кун пирки çырса ăнлантармалла пулать. Асăннă хут çукки çав çынран ăна регистрацие тăратма заявлени илмелле маррине пĕлтерет.

Суйлав пирки калас пулсан, мартăн 2-мĕшĕнче эпир 8 сехетрен 20 сехетчен ĕçлетпĕр.

Çамрăксен пултарулăхĕ

Сарлака ман юратнă çĕр-шывăм

«6-7 классенче манăн сăвă çырас туйăм çуралчĕ. Тĕрлĕрен сăвă кĕнекисем вулани, сăвăçсен пурнăçĕсемпе паллашни, сăвă çырас йĕркене вĕренни поэзи юратăвне çаврăнчĕ. 4-5 çул ĕнтĕ эпĕ сăвăпа туслашса пурăнатăп, пушă вăхăтăма сăвă çырса ирттеретĕп. Çак ĕç çăмăл маррине ăнланатăп эпĕ. Чăн малти вырăнта тăван чĕлхене юратни, ăна хисеплени тăрать. Çак ĕçре мана Турайри вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен Галина Изосимовна Андреева тĕкĕ парса, хавхалантарса пырать. «Пулăшу сăвă çырас туртăма вăйлатать кăна», – терĕ паян Турайри вăтам шкулта 11 «а» класра вĕренекен Ольга Ефимова. Халĕ эпир сире унăн «Сарлака ман юратнă çĕр-шывăм» сăввипе паллаштарăпăр. Унта тăван çĕр-шыва юратни малти вырăнта. Çĕршыв хӳтĕлевçисен çурăмĕ хыçĕнче мĕнле илем пулни пирки хăвна та ан мантăр. Çак тĕллев хывăннă сăвă йĕркисене.

Сарлака ман юратнă çĕр-шывăм,
Пурăнассăм килет вăл пулсан.
Ман урам та, юратнă ял-йышăм,
Тăван кил те чунра пурăнан.
Юнашар аслă Атăл вырнаçнă,
Кĕмĕл сапнăн ун çийĕ курнать.
Çил вĕрсен те, хĕвеллĕ пăхсан та
Унăн сăнĕ асра упранать.
Ан кулян эс, юратнă Çут кӳллĕм
Сан аппу пин инçе пулнăран.
Яланах эп сире юрататтăм:
Çут кӳлле, Шур кӳлле пĕрех, тан.
Çилпеле кашлакан вăрмансем те
Асран каймĕç ĕнтĕ нихăçан.
Унăн аслă пур(ă)наканĕсем те
Пĕрмаях куç умне тухакан.
Анчах питĕ хаяр халь этемĕ,
Пĕтерет вăл мĕн пур илеме.
Ваттисен сăмахне итлемерĕ –
Çавăнпа та çунать ман чĕре.
Эй, этемĕ, пăхсам çакăнта эс!
Итлесем чунăмри сăмаха!
Сарлака ман юратнă çĕр-шывăм –
Ун пахалăхĕ пирĕн умра.

Пенсионерсемпе граждансене

Чăваш Республикинчи аслă ăрури представительсен форумĕн участникĕсем чĕнсе калани

Эпир, Чăваш Республикинчи аслă ăрури представительсен форумĕн участникĕсем, «Раççейри пенсионерсен Союзĕ» обществăлла организаци членĕсем, пур пенсионерсемпе граждансене тата суйлавçăсем патне мартăн 2-мĕшĕнче РФ Президентчĕн суйлавне активлă хутшăнма чĕнсе калатпăр. Юлашки çулсенче Раççей ырă енне улшăнни савăнтарать. Çакăнта Чăваш Республикин социаллă-экономика лару-тăрăвĕ те ырă енне улшăнсах пынин витĕмĕ пур. Пирĕн пурнăç малашне те çĕнелсе улшăнасси эпир суйлава активлă хутшăннинчен тӳрремĕнех килет. Çавăнпа та пурте суйлава хутшăнса Раççейшĕн, Чăваш Еншĕн сасăлар!

Хаçатра çырнă хыççăн

«Гигант» хуçалăх панкрутлăхĕ пирки

Раççей Федерацийĕн финанс сыватăвĕпе панкрутлăх ыйтăвĕсемпе ĕçлекен Федераллă службин Чăваш Республикинчи территори органĕн заявленийĕпе килĕшӳллĕн Муркаш районĕнчи «Гигант» хуçалăхра Арбитраж сучĕ 2002 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕнче сăнав йĕрки кĕртрĕ. Сăлтавĕ: парăмçă бюджет тата бюджет тулашĕнчи фондсене вăхăтра тӳлемелли кредит парăмĕсене – 6022 пин – тенкĕ тӳлеменни. Парăмçă кредиторсен ыйтăвĕсене саккунпа пăхнă вăхăтра тивĕçтерейменрен «Гигант» ял хуçалăх производство кооперативĕ тĕлĕшпе 2002 çулхи августăн 26-мĕшĕнчен конкурс производстви кун йĕркине кĕчĕ. Конкурс управляющийĕ пулма М.Н. Сержантова çирĕплетнĕ. Панкрут процедурин тапхăрĕнче конкурс массисене реализацилениичен тухнă 2403 пин тенкĕ укçа пĕрремĕш, иккĕмĕш, виççĕмĕш черетре тăракан кредиторсене саплаштарма кайнă (пурнăçа тата сывлăха сиен кӳнишĕн, ĕç укçи, пособисем, налук парăмĕсем тӳлеме). Тăваттăмĕш черетре тăракансен ыйтăвĕсене тивĕçтермелли 30 процент, 5-мĕш черетрисен пĕтĕмпех юлнă. 2004 çулхи сентябрĕн 21-мĕшĕнче Арбитраж сучĕн палăртăвĕпе «Гигант» ял хуçалăх производство кооперативĕнче конкурс производстви вĕсленнĕ, предприятие ликвидациленĕ.

«Гигант» ЯХПК «Колос» хупă акционерлă общество учредителĕ пулса тăнă. Акционерлă обществăна налук учетне тăратнă кун 2001 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ. «Гигант» ЯХПК сăнав процедуринче пулнă самантра пур ĕçченсене те «Колос» хупă акционерлă обществăна куçарнă. 2002 çулхи октябрĕн 26-мĕшĕнчи «Ĕçлеме пултараймалăх (панкрутлăх) çинчен» федераллă саккунпа килĕшӳллĕн Федераллă налук службин районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕ 2005 çулхи июлĕн 28-мĕшĕнче Арбитраж судне «Колос» хупă акционерлă обществăна панкрут тесе йышăнма ыйтса çырупа тухать. Çак куна хуçалăхăн тĕрлĕ шайри парăмĕсем пĕтĕмпе 1192 пин тенкĕ пулнă. 2005 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнче акционерлă обществăра сăнав ĕçĕ пуçланнă. ЧР Арбитраж сучĕн 2006 çулхи январĕн 31-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе «Колос» акционерлă обществăна ĕçлеме пултараймасть тесе йышăннă, ун тĕлĕшпе конкурс производстви уçнă. 2006 çулхи май уйăхĕн 4-мĕшĕнче Арбитраж сучĕ 2006 çулхи майăн 2-мĕшĕнче тунă мирлĕ килĕшĕве çирĕплетсе конкурс производствине вĕсленĕ. Анчах... мирлĕ килĕшӳ условийĕсене пурнăçламанран ЧР Арбитраж сучĕн палăртăвĕпе мирлĕ килĕшĕве 2007 çулхи февралĕн 6-мĕшĕнче пăрахăçланă, «Колос» тĕлĕшпе панкрутлăх ыйтăвĕсене çĕнĕрен пуçланă. «Колос» хупă акционер обществин конкурс управляющийĕ пулма Борис Павлович Литтие çирĕплетнĕ. Кредиторсен ыйтăвĕсен реесторне 3692,3 пин тенкĕлĕх хатĕрленĕ. Кредиторсен ыйтăвĕсен реестрне 2007 çулхи çу уйăхĕн 17-мĕшĕнче хупнă. Пурлăх хакне конкурс управляющийĕн ыйтăвĕпе никама пăхăнман хаклавçăпа тунă.

И. ШАРОНОВА, налук инспекцийĕн ĕçченĕ.